28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАЙ
5
ШАМАТКУН
85(6836) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔНЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ССР Союзĕн Совнаркомĕнче

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кăларасси çинчен

Çĕршыва хўтĕлес ĕç валли укçа-тенкĕ çĕнĕрен хутшăнтарас шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне 25 миллиард тенкĕлĕх, 20 çуллăха кăларас.

2. Заем облигацийĕсене тата вĕсен тупăшĕсене, çак шутра выигрышсене те, государствăннăй тата вырăнти налогсемпе сборсем хурассинчен хăтарас.

3. ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссарначĕ Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кăларма тăратнă Условисене çирĕплетес.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1945 çулхи майăн 4-мĕшĕнче çирĕплетнĕ

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кăлармалли

УСЛОВИСЕМ

1. Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемĕ икĕ кăларăмран тăрать: выигрышлă тата процентлă кăларăмсем.

Заемăн выигрышлă кăларăмне халăх хушшинче сарма кăларнă. Заемăн процентлă кăларăмне ялхуçалăх артелĕсенче тата çĕре пĕрлешсе ĕçлекен юлташлăхсенче вырнаçтарассĕ.

Выигрышлă кăларăм облигацийĕсенчен илмелли пĕтĕм тупăша выигрышсемпе тўлессĕ, процентлă кăларăм облигацийĕсенчен илмелли тупăша купонсем çине тивекен процентсемпе тўлессĕ.

I. ВЫИГРЫШЛĂ КĂЛАРĂМ

2. Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемĕн 20 çуллăх срокĕ 1945 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланса 1965 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен пырать.

3. Заемăн выигрышлă кăларăмĕ разрядсем çине пайланать, кашни разрядра 100-шер миллион тенкĕ пулать.

Кашни разряд 20 пин серирен тăрать. Кашни разрядри серисен номерĕсем 60.001 пуçласа 80.000 çити пулассĕ.

Кашни серири облигацисем 1-мĕш номертен пуçласа 50-мĕш номере çити пулассĕ.

4. Заемăн выигрышлă кăларăмĕ тăрăх облигацисене 500, 200, 100, 50 тата 25 тенкĕлĕх кăларассĕ.

5. 500 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серири 100 тенкĕлĕх 5 облигацирен тăрассĕ, вĕсен пилĕк номер пулать, вĕсем тăрăх 5 выигрыш тухма пултарать. 200 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серири 100 тенкĕлĕх 2 облигацирен тăрассĕ, вĕсен икĕ номер пулать, вĕсем тăрăх икĕ выигрыш тухма пултарать. Выигрышсем облигацире кăтартнă кашни номер çине пĕр вăхăтрах тухассĕ.

50 тата 25 тенкĕлĕх облигацисем 100 тенкĕлĕх облигацисен пайĕсем пулса тăрассĕ тата 100 тенкĕлĕх облигаци çине тухнă выигрышăн тивĕçлĕ пайне (½. ¼ пайне) илме право парассĕ.

Асăрхаттарни: 50 тата 25 тенкĕлĕх облигацисене вĕсенчен хаклăрах тăракан облигацисем парса подписчиксемпе расчет тума май çук чухне памашкăн çеç кăларассĕ.

6. Заемăн выигрышлă кăларăмĕ тăрăх 50.000, 25.000, 10.000, 5.000, 1.000, 500 тата 200 тенкĕлĕх выигрышсем пулассĕ, вунта облигаци хакĕ те (100 тенкĕ) кĕрет.

Заемăн 20 çуллăх срокĕ хушшинче мĕнпур облигацисен виççĕмĕш пайĕ выляса илет, облигацисен виçĕ пайĕнчен ытти икĕ пайĕшĕн вĕсен хакĕ чухлĕ укçа тўлессĕ.

Выляса илнĕ облигацишĕн укçа тўлессĕ те вăл вара малашнехи вылявсене хутшăнмасть.

7. 20 çуллăх срокра выигрышлă кăларăм тăрăх 40 выляв—кашни çул иккшер выляв пулса иртет.

Вылявсем 1946 çултан пуçласа ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссарначĕ палăртнă срoксенче пулса иртессĕ.

Выигрышсен пĕтĕм сумми заемăн 20 çуллăх срокĕ хушшинче вăтамран кашни çулталăкра 4 процент чухлĕ пулать.

8. Выигрышсен кашни вылявĕнче выигрышлă кăларăмăн кашни разрячĕ çине, урăхла каласан—заемăн çав кăларăмĕнчи кашни 100 миллион тенки çине, çакăн чухлĕ выигрыш тухмалла:

Выигрышсен пысăкăшĕ тенкĕпе, облигацисен хакне те кĕртсе	Выигрышсен хисепĕ				
	1—10-мĕш вылявсенче кашниниче тухать	11—20-мĕш вылявсенче кашниниче тухать	21—30-мĕш вылявсенче кашниниче тухать	31—40-мĕш вылявсенче кашниниче тухать	Пĕтĕмпе 40 вылявра кашни 100 миллион тенкĕ çине тухать
50.000	1	1	1	1	40
25.000	2	2	2	2	80
10.000	5	5	5	5	200
5.000	10	10	10	10	400
1.000	100	100	100	100	4.000
500	1000	1000	1000	1000	40.000
200	7.507	7.257	7.007	6.757	285.2[illegible]0
Кашни вылявра выигрышсен пĕтĕм хисепĕ	8.625	8.375	8.125	7.875	330.000
Кашни выляври выигрышсен пĕтĕм сумми (тенкĕпе)	2.301.400	2.251.400	2.201.400	2.151.400	89.056.000

9. Выигрышлă заемăн выляса илмен облигацийĕсене 1950 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 15 çул хушши, заем срокĕ тухиччен, хăйсен хакĕ чухлĕ укçа тўлесе каялла илессĕ.

Заемăн выигрышлă кăларăмĕн кашни 100 миллион тенкинчен: 1950—1955-мĕш çулсенче—кашни çулах 2.500.000-шер тенкĕлĕх, 1956—1960-мĕш çулсенче—4.200.000-шер тенкĕлĕх, 1961—1965-мĕш çулсенче—кашни çулах 6.200.000-шер тенкĕлĕх каялла илессĕ.

Выигрышлă кăларăмăн 1950—1964-мĕш çулсенче каялла тўлесе илме тивĕçлĕ облигацийĕсене кашни çул пулса иртекен вылявсенче палăртассĕ; каялла тўлесе илес тĕлĕшпе вылявсем иртмелли срoксене ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссарначĕ палăртать.

Каялла тўлесе илмелли вылявсенче тухман облигацисене 1965 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тўлесе илессĕ.

10. Выигрышлă кăларăмăн выляса илнĕ облигацийĕсене, çавăн пекех тата хăйсен хакĕ чухлĕ каялла илмелли вылявра тухнă облигацисене 1966 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕччен парса вĕсемшĕн укçа илме пулать; çак срок иртнĕ хыççăн вара укçа илме ыйтса паман облигацисем хăйсен вăйне çухатассĕ тата вĕсемшĕн укçа тўлемессĕ.

II. ПРОЦЕНТЛĂ КĂЛАРĂМ

11. Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемĕн процентлă кăларăмĕн çирĕм çуллăх срокĕ 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1966 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен пырать.

12. Заемăн процентлă кăларăмĕ разрядсем çине пайланать, кашни разрядра 100 миллион тенкĕ пулать.

Кашни разряд 20.000 серирен тăрать. Кашни разрядăн серийĕсем 60.001 пуçласа 80.000 çити пулассĕ.

Кашни серири облигацисем 1-мĕш номертен пуçласа 50-мĕш номере çити пулассĕ.

13. Заемăн процентлă кăларăмĕнче 1.000, 500 тата 100 тенкĕлĕх облигацисем пулассĕ.

1.000 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серири 100 тенкĕлĕх 10 облигацирен тăрассĕ, вĕсен 10 номер пулать, вĕсен пĕтĕм хакĕ тăрăх процент шучĕпе тупăш илме пулать. 500 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серири 100 тенкĕлĕх 5 облигацирен тăрассĕ. Вĕсен 5 номер пулать тата вĕсен пĕтĕм хакĕ тăрăх процент илме пулать.

14. Процентлă кăларăм облигацийĕсем тăрăх илмелли тупăша çулталăкра пĕр хут—купонсемпе икĕ процент чухлĕ тўлессĕ. Купонсем тăрăх тўлемелли срoксем 1947 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса кашни çулах январĕн 1-мĕшĕнче пуçланассĕ.

15. Процентлă кăларăмăн облигацийĕсене 1961 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 5 çул хушши кашни çулах пĕр пек пайсемпе тўлесе каялла илессĕ.

1961—1965-мĕш çулсенче каялла тўлесе илмелли облигацисене каялла илес тĕлĕшпе кашни çулах пулакан вылявсенче палăртассĕ, вăл вылявсене кашни çулах январĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр иртгерессĕ.

Каялла илмелли вылявра тухман облигацисене 1966 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тўлесе илессĕ.

Тўлесе илнĕ чухне облигаци хуçисене облигаци хакне тўлессĕ.

Каялла илмелли вылявра тухнă облигацисемшĕн купон тăрăх выляв пулнă çулхи январĕн 1-мĕшĕ таран тўлессĕ. Ун хыççăнхи купонсемшĕн тўлемессĕ.

16. Процентлă кăларăмăн тўлесе илме тивĕçлĕ облигацийĕсене, çавăн пекех срок çитнĕ купонсене те, укçа илме 1967 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен пама пулать. Çак срок иртсен вара укçа каялла илме паман облигацисемпе купонсем хăйсен вăйне çухатассĕ тата вĕсемшĕн укçа тўлемессĕ.

ССР Союзĕн Финанс Халăх
Комиссарĕ **А. ЗВЕРЕВ.**

Правительство çĕнĕ заем кăларасси çинчен пĕлтернине республикăри ĕççыннисем патриотла пысăк кăмăлпа кĕтсе илчĕç

МАЛТАНХИ ИТОГСЕМ

Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кăларасси çинчен пĕлтернине республикăри хуласемпе колхозсенче питĕ пысăк çĕкленўпе кĕтсе илчĕç. Çĕнĕ заема кăларасси çинчен пĕлтернĕ хыççăн темиçе сехет хушшинченех пирĕн республикăра 78.387.000 тенкĕлĕх заем çырăннă, 23.296.000 тенкине тўлесе татнă.

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем майăн 4-мĕшĕнче 8.952.000 тенкĕлĕх çырăннă, Шупашкар хулинчи колхозсемпе колхозниксем 186.000 тенкĕлĕх çырăнса укçине тўлесе татнă.

Çĕнĕ заем кăларассине пĕлтернĕ хыççăн темиçе сехет хушшинчех Вăрнар районĕнчи колхозсемпе колхозниксем 1.933.000 тенкĕ, Куславкка районĕнче—1.650.000 тенкĕ, Ишлей, Вăрмар районĕсенче—1.000.000-шер тенкĕ заем укçине тўленĕ.

Шупашкарта

Хулари ĕççыннисем Совет правительстви вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш Заем кăларнине хапăлласа кĕтсе илчĕç. Çĕнĕ Заем тухни çинчен радиопа итленĕ хыççăнах заводсемпе фабрикăсенче, промартельсемпе учреждениcенче, шкулсенче митингсем пулса иртрĕç. Çав митингсенче рабочисем, инженерсемпе техниксем тухса каласса, правительство çĕнĕ заем кăларнине ырлассĕ, ăна—çĕнтерў заемĕ, тесе хаклассĕ.

Якунин юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводра митингра паллă стахановка, комсомолецсемпе çамрăксен бригадин бригадирĕ Сохнина юлташ, çĕнĕ заема çырăнса, çапла каланă:

— Çĕнтерў хĕвелĕ тухса килнĕ вăхăтра,—тенĕ вăл,—хамăрăн перекетлесе хăварнă укçана государствăна кивçен пама та тараватлă. Эпĕ уйăхне 555 тенкĕ ĕçлесе илетĕп. Правительство çĕнĕ заем кăларнине тулли кăмăлпа йышăнса, ăна 1200 тенкĕлĕх çырăнатăп. Мĕншĕн тесен эпĕ çав укçа çĕнтерў тума кайнине лайăх ăнланатăп. Çĕнĕ заем—татăклă çĕнтерў заемĕ.

Заводра ĕçлекенсенчен чылайăшĕ çĕнĕ заема хăйсен уйăхри ĕçукçинчен ытларах çырăннă. Слесарь Кусакин уйăхри ĕçукçинчен 4,5 хут ытларах çырăннă. Стахановка Сергеева çырăннă сумма ĕçукçинчен икĕ хут нумайрах. Федорова работница çырăнни ĕçукçин 200 проценчĕ ытла шутланать.

Руденко юлташ начальник пулса ĕçлекен заводра заема çырăнмасăр пĕр çын та юлман. Чылайĕшсем хăйсен икĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ государствăна кивçен панă. Цех коллективĕ пĕтĕмпе çырăннă суммăна илсен, уйăхри ĕçукçин 136 проценчĕ чухлĕ пулать. Громов юлташ ертсе пыракан цехра ĕçлекенсем ĕçукçин 135 проценчĕ чухлĕ, конструкторсен отделĕнче ĕçлекенсем—160 проценчĕ чухлĕ, техника отделĕн работникĕсем — 165 проценчĕ чухлĕ çырăннă.

* * *

Пир-авăр фабрикинче ĕçлекенсем Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне сарас ĕçе правительство постановленине радиопа итленĕ хыççăнах тытăннă. Каçхине 9 сехет тĕлнелле Заема вырнаçтарас ĕçе кунта пĕтĕмпех вĕçленĕ. Çĕнтерў заемне фабрикăра ĕçлекенсем кашниех çырăннă. Чылайĕшĕ хăйсен 2—3 уйăхри ĕçукçине государствăна кивçен панă. Сăмахран, мастер помощникĕ Хомагорова юлташ ĕçукçин 300 проценчĕ чухлĕ, Ургалкинăпа Черлова работницăсем—200 проценчĕ чухлĕ çырăннă. Арлакан фабрика заведующийĕ Рычкова юлташ çырăннă сумма уйăхри ĕçукçинчен икĕ хут нумайрах.

Заема çырăнса илес ĕçе Баранова юлташ ертсе пыракан сменăра ĕçлекенсем уйрăмах активлăн хутшăннă. Вĕсем хăйсен уйăхри ĕçукçин 165 проценчĕ чухлĕ çырăннă. ФЗО шкулĕнче вĕрентекенсемпе вĕренекенсем те заема лайăх çырăннине палăртмалла.

Укçине те çийĕнчех тўлессĕ

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Çĕнĕ заема хавасланса çырăннипе районри ĕççыннисем тăван çĕршыва юратнине, çĕнтерўшĕн нимĕн те шеллеменнине кăтартассĕ. Районра заема майăн 4-мĕшĕнчех 2,5 миллион тенкĕлĕх вырнаçтарнă, укçине те çийĕнчех тўлессĕ.

Заем илме çырăнас ĕç уйрăмах колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăнăçлăн пырать. «Динамо» колхозра заема малтанхи кунах 180 пин тенкĕлĕх çырăннă. Укçине те çавăн чухлĕ пухса панă.

Çавăн пекех, заема «13 лет Октября» колхозра—80 пин тенкĕлĕх, «Путь Ленина» колхозра—61 пин тенкĕлĕх, Калинин ячĕпе тăракан колхозра—70 пин тенкĕлĕх çырăннă. Укçине çырăннă чухлех пухса, районри перекет кассине хывнă.

Г. КРЮЧКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Совет государствин заемĕсем

Гитлерла Германие хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçа расхочĕсене витме государствăна укçа-тенкĕ нумай кирлĕ. Кунпа пĕрлех нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хуласемпе ялсене ура çине тăратма, ĕççыннисен пурнăçне йăла условийĕсене лайăхлатма та сахал мар укçа каять.

Государство бюджечĕн тĕп тупăшне пирĕн халăх хуçалăхĕ—промышленность, транспорт, сĕрĕçĕ тата суту-илў—парса тăрать. Бюджетра халăх обязательнăй йĕркепе тўлекен тата хăйĕн ирĕкĕпе хывакан укçа-тенкĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Халăх хăйĕн ирĕкĕпе укçа-тенкĕ панин пĕр майĕ вăл—государство заемĕсене çырăнни пулать.

Пирĕн çĕршывра заемсене вырнаçтарас ĕç яланах ăнăçлăн пулса пынă. Ĕççыннисен заем çырăнса илес тĕлĕшри активлăхĕ вăрçă çулĕсенче татах та ўсрĕ. Пирĕн республикăра 1936—1941 çулсем хушшинче вырнаçтарнă ултă заемран бюджета 103.232.000 тенкĕ кĕнĕ пулсан, 1944 çулта вырнаçтарнă Виççĕмĕш Военнăй Заемран кăна 185.589.000 тенкĕ кĕнĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи виçĕ заема вырнаçтарнипе вара 388.963.000 тенкĕ пухăннă. Заема вырнаçтарасси пирĕн республикăра çултан çул ўссе пыни çакăнтан лайăх курăнать ĕнтĕ.

Совет заемĕсем государствăна кăна мар, ĕççыннисене хăйсене те пысăк усă парассĕ. Рабочисемпе служащисем, колхозниксем заем облигацийĕсемпе тăтăшах укçа выляса илессĕ. Иртнĕ çулта вылявсемпе тухнă укçана республикăра 9.350.000 тенкĕ, кăçалхи виçĕ уйăхра 4.178.000 тенкĕ тўленĕ. Чылайĕшсен облигацийĕсем çине пысăк вылявсем тухнă. Сăмахран, Пăрачкав районĕнчи «Передовик» колхоз членĕ Льговская 100 тенкĕлĕх облигаципе 50.000 тенкĕ, Çĕмĕрле районĕнчи Турхан ял çынни И. Мушкин 25.000 тенкĕ выляса илнĕ.

Юлашки вăхăтра чылай районсенче заем облигацийĕсем тытакансемпе ĕçлессине вайлатнă. Выляв тухнине тĕрĕслемелли сĕтелсем усса, колхозниксен облигацийĕсене вылявсем тăрăх тĕрĕслессĕ. Сăмахран, Октябрьски районра тĕрĕслев сĕтелĕсен работникĕсем пĕр апрель уйăхĕнче кăна 600 выляв тухнине тупнă.

Анчах та çавăн пек выляв сĕтелĕсен пур вырăнсенче те усман-ха. Ĕççыннисен чылай облигацийĕсене тĕрĕслемен, перекет кассисем те ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлессĕ.

Паян эпир Совет правительстви çĕнĕ заем—Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне кăларни çинчен пĕлтĕмĕр. Çĕнĕ заемăн укçи Тăван çĕршывăн оборонине татах та тĕреклетме, нимĕç захватчикĕсем аркатнă хуласемпе ялсене ура çине тăратма тата халăх культурине ўстерме каять. Çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕçе пирĕн ĕççыннисем яланхи пекех активлăн хутшăнасса шанса тăма пулать.

А. МИХАЙЛОВ.
Чăваш республикинчи перекет кассисен Управленийĕн начальникĕ.

Тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме

МУРКАШ. (Телефонпа). Йывăр вăрçă пĕтсе пынишĕн савăнса, Сталин юлташăн Майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ çине тата Хĕрлĕ Çар Берлина илни çине ответлесе, районри ĕççыннисем Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне пысăк çĕкленўпе çырăнассĕ.

Ададайри Свердлов ячĕпе тăракан колхозра çĕнĕ заема ĕçлеме пултаракансем пурте çырăнса илнĕ. Чылайĕшсем 2-шер пин тенкĕлĕх çырăннă, пĕр пинрен кая никам та çырăнман. Колхоз председателĕ, Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Т. В. Налимов юлташ 2500 тенкĕлĕх çырăннă.

Юнашарти «Крестьянин» колхозра та çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕç активлăн иртнĕ. Кунта заема 65 пин тенкĕлĕх сарса, укçине те çийĕнчех районри перекет кассине леснĕ.

Заем сарас ĕç, çавăн пекех, «Маяк», «Люцерна», «Броневик» колхозсенче ăнăçлăн пырать. Капмашри «Свобода» колхозра 92 пин тенкĕ пухнă. Уйрăм колхоз председателĕсем çĕнĕ заема пысăк суммăллăх çырăнассĕ. Çавăн пек, «Свобода» колхоз председателĕ И. И. Петровский юлташ 5 пин тенкĕлĕх, «Знамя труда» колхоз председателĕ П. И. Иванов юлташ 6 пин тенкĕлĕх çырăннă.

Малтанхи кун çĕнĕ заема районри колхозсемпе колхозниксем хушшинче 1,5 миллион тенкĕлĕх, рабочисемпе служащисем хушшинче 260 пин тенкĕлĕх (пĕтĕмпе 1.760 пин тенкĕлĕх) вырнаçтарнă. Вăл шутран укçине 1.015 пин тенкĕ пухса, районри перекет кассине хывнă.

В. ИЛЬИН,
ВКП(б) Райкомĕн секретарĕ.

Пысăк çĕкленўпе

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 4-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Правительство çĕнĕ заем кăларасси çинчен пĕлтернине районри колхозниксем пысăк çĕкленўпе кĕтсе илчĕç. Янгас ял Советĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, пĕтĕмпе 60.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех парса татрĕç. Çак колхозри икĕ фронтовик амăшĕ. 62 çулхи колхозник Г. Овчинников, çĕнĕ заема 1.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех кăларса пачĕ. Сакăр ача амăшĕ, фронтовик арăмĕ Е. Галкина колхозница та, 1.400 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тўлерĕ. М. Николаев колхозник 2.000 тенкĕлĕх, П. Григорьев колхозник 1.300 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Вĕсем те укçине çийĕнчех парса татрĕç.

Районри «Красноармеец», Молотов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне çырăнас ĕç ăнăçлăн пулса пырать.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

ВКП(б) Обкомĕнче

Ир акмалли тĕштырăсемпе пĕр çул ўсекен курăксене акса пĕтерес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх ирттерессии çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ майăн 5-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче ир акмалли тĕштырăсемпе пĕр çул ўсекен курăксене акса пĕтерес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх ирттерме йышăннă.

ВКП(б) Обкомĕ райкомсен фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх çинчен колхозсенче, МТС-сенче, бригадăсенче анлăн ăнлантарса пама, ун çинчен кашни колхозника, тракториста, совхозри кашни рабочие пĕлтерме, çураки ĕçĕсене тумашкăн колхозсен, МТС-семпе совхозсен пĕтĕм вăйĕпе майĕсене мобилизацилеме тата çураки ĕçĕсене анлăн, агротехника кăтартса панисене çирĕппĕн пăхăнса туса пыма хушнă.

КОМСОМОЛЕЦСЕМПЕ ÇАМРĂКСЕН ПУÇАРĂВĔ

Çĕрпў районĕнчи «Сталинец» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем Чăваш республики 25 çул тултарнă уява çĕнĕ ситĕнўсемпе кĕтсе илме хатĕрленессĕ. Колхозăн шăнса пĕтнĕ сачĕ вырăнне вĕсем кăçал çуркунне çĕнĕрен виçĕ гектар çинче садпахчи тума 155 тĕп улма йывăççи, 200 тĕп чей çырли йывăççи лартассĕ. Кашни комсомолецпа союзра тăман çамрăк харпăрхăй кил вырăнĕнче 15—20-шер йывăççран кая мар лартмалла. Çĕрпў хулипе Красноармейски район центрне сыхăнтаракан аслă çул хĕррипе 200 тĕп йывăç лартмалла. «Сталинец» колхозри сичĕ çул вĕренмелли шкул тавра 50 йывăçран кая мар лартма, çак ĕçе шкул ачисене анлăн явăçтарма йышăннă.

«Сталинец» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем Çĕрпў районĕнчи мĕнпур çамрăксене хăйсем пек ĕçлеме чĕнсе çыру çырнă.

И. И. Мечников çуралнăранпа 100 çул çитни çинчен

1945 çулхи майăн 15-мĕшĕнче вырăссен аслă ученăйĕ, хальхи вăхăтри микробиологин никĕсне хываканĕ И. И. Мечников çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. И. И. Мечников çуралнăранпа 100 çул çитнине палăртса ирттерме Комитет тăвас. Комитета çаксене кĕртес: Г. А. Митерева (вăл председатель пулать), А. И. Абрикосова, Н. Ф. Гамалейăна, З. В. Ермольевăна, М. М. Завадовские, Б. Л. Исаченкова, Ф. В. Кафтанова, М. Н. Лебедевăна, Т. Д. Лысенкăна, Л. А. Орбелие, В. В. Парина, П. Г. Сергиева, В. Д. Соловьева, И. Д. Страшуна, С. Г. Суворова.

2. Çав Комитета И. И. Мечниковăн ятне ĕмĕрлĕхе усраса хăвармалли ĕçсене палăртса хума, халăха И. И. Мечниковăн наукăллă ĕçĕсемпе паллаштарас ĕçе пулăшма тата Мускавра И. И. Мечников çурални 100 çул çитнĕ май чаплă лару туса ирттерме хушас.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 3-мĕшĕнче БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем ПИЛЛАУ хулипе портĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшмантан ФРИШ-НЕРУНГ сăмсахне тасататсшăн çапăçнă. КАЛЬБЕРГ, ЛИП, КАЙЗЕРХОФ ялĕсене туртса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, БАРТ, БАД ДОБЕРАН, НОЙБУКОВ, ВАРИН, ВИТТЕНБЕРГЕ хулисене туртса илнĕ те майăн 3-мĕшĕнче ВИСМАР хулипе ВИТТЕНБЕРГЕ хули тĕлĕнче пирĕнпе союзлă Англи çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Çавăн пекех тата фронт çарĕсем КРЕПЕЛИН, НОЙ КЛОСТЕ, БЮТЦОВ, ГЮСТРОВ, ГОЛЬДБЕРГ, КАРОВ, МЕЙЕНБУРГ, ПУТЛИТЦ, ПРИТЦВАЛЬК, ПЕРЛЕБЕРГ ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ. Майăн 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 10.600 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата 328 самолет тытса илнĕ. Тыткăна илнисен шутĕнче ĕç повинноçĕн 5-мĕш Штеттин округĕн командующийĕ генерал-майор МАТО пур.

БЕРЛИНРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем малалла тапăнса пынă, ВИЛЬСНАК, ГЛЕВЕН, ШТЮДЕНИТЦ, НИТЦОВ, ВЕЛЬГАСТ, ШТРОДЕНЕ, РИНОВ, ШПАТЦ, ХОЭН-НАУЭН ятлă пысăк ялсене çапăçса тытса илнĕ те, ВИТТЕНБЕРГЕ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ЭЛЬБА шывĕ çине тухса, пирĕнпе союзлă Америка çарĕсемпе пĕрлешнĕ.

Майăн 2-мĕшĕнче 21 сехет иртнĕ хыççăн, БЕРЛИНРА фронт çарĕсем тата 20.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, унсăр пуçне, госпитальсенче аманнă нимĕç салтакĕсене 10.700 çынна тытса илнĕ. Пĕтĕмпе БЕРЛИНРА майăн 2-мĕшĕнче фронт çарĕсем 100.700 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче правительствăн сывлăшри эскадрин командирĕ генерал-лейтенант БАУР, БЕРЛИНРИ полицин медицина служби начальникĕ—медицина служби генерал-майорĕ ВРУБЕЛЬ, полици генерал-лейтенанчĕ РАТТЕНГУБЕН, Геббельс канцелярийĕн начальникĕ САЙЛЕР.

Майăн 2-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем БЕРЛИН районĕнче 34.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата 37 танкпа 140 хир туппи ытла тытса илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче нимĕçсен 236-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ генерал-майор РОБЕН.

Çапла вара, БЕРЛИН районĕнче майăн 2-мĕшĕнче пĕтĕмпе 134.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, вăл шутран—100.000 çынна БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, 34.000 çынна УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, малалла тапăнса пырса, майăн 3-мĕшĕнче ЦЕШИН хулине—çулсен паха узелне тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне—туртса илнĕ, çавăн пекех тата ВАЛЬТЕРСДОРФ, БУТОВИЦЕ, ФРИДЭК, КАРВИННА, ПОГВИЗДУВ, ГОЛУЩУВ, ЛЕШНА, МАКОВ ятлă пысăк ялсене йышăннă. Майăн 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 1.400 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем БРНО хулинчен хĕвелтухăçнерехре малалла тапăнса пынă, ЛАЧНОВ, ЗЛИН, ОСТРОКОВИЦЕ, ШЕЛЕШОВИЦЕ, РАТАЕ, КРЖЕНОВИЦЕ ятлă пысăк ялсене çапăçса туртса илнĕ. Майăн 2-мĕшĕнче фронт çарĕсем 1.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ. Чехословаки партизанĕсем нимĕçсен 19-мĕш танковăй дивизийĕн командирне МЮЛЛЕР генерал-майора тыткăна илнĕ те пирĕн çарсен аллине панă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 2-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 53 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем малалла тапăнса пынă. Росток хулипе Варнемюнде хулине туртса илнĕ хыççăн совет чаçĕсем нимĕç çарĕсен Барт хули районĕнчи ушкăнĕн каялла чакмалли çулĕсене пурне те татнă. Çав тери хăвăрт пыра-пыра çапса, пирĕн танкистсемпе пехотинецсем тăшман хирĕç тăнине пусарса лартнă та Барт хулине—Балтика тинĕсĕнчи порта—туртса илнĕ. Фронтăн хĕвеланăç еннелле наступлени туса пыракан çарĕсем 60 километр таран малалла кайнă та пирĕнпе союзлă Англи çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Кун каçиччен çапăçусенче 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă. Чехословакисен Цешин хули патне пымалли вырăнсенче тăшман хытă хирĕç тăнă. Цешин хулинчен нимĕçсем хăйсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ туса хунă. Çурçĕрпе хĕвелтухăç енчен Цешин хулине темиçе лини траншея, чугунпа бетонран тунă юпасем, минăсем лартса тултарнă анлă хирсем хӳтĕлесе тăнă. Хулари чул çуртсемпе заводсен корпусĕсене йĕри-тавра хӳтĕлеме майлаштарнă. Цешин хули районне тăшман хăйĕн пысăк вăйĕсене илсе пынă та темиçе хутчен те контратакăсене кĕрте-кĕрте янă. Пирĕн гварди чаçĕсем, вăйлăн пыра-пыра çапса, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та хулана виç енчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă, пирĕн боецсем тăшманпа алă вĕççĕн тытăçа-тытăçа илнĕ, вара тăшман гарнизонне аркатса тăкнă та Цешин хулине—тăватă чугун çулăн тата темиçе шоссе çулĕн узелне—туртса илнĕ. Хулана пырса кĕмелли вырăнсенче тата хула урамĕсенче тăшман виллисем нумай выртса юлнă. Нимĕçсенчен 42 тупă, 140 пулемет, çар пурлăхĕн склачĕсем, горючи эшелонĕ, лашасем тиенĕ 4 эшелон тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе Тинĕс-çар Флочĕн чаçĕсенче Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказа питĕ савăнса кĕтсе илнĕ.

Германи столицине Берлина туртса илнĕ çарсенче митингсем çав тери пысăк хаваслăхпа пулса иртнĕ. Шатилов генерал-майорпа гварди полковникĕн Негодăн соединенийĕсен апрелĕн 30-мĕшĕнче Германи рейхстагĕн çуртне туртса илнĕ боецĕсем, сержанчĕсем тата офицерĕсем хаваслансa çапла каланă: «Сталин саламланине эпир питĕ хĕпĕртесе йышăнтăмăр. Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказĕнче пирĕн çинчен те каланă. Эпир советсен ытти чаçĕсемпе пĕрле Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартрăмăр».

Буга красноармеец çапла каланă: «Эпĕ нимĕçсемпе 1918 çулта та çапăçнă. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче эпĕ нимĕçсемпе çĕнĕрен Украинăра тата Сталинградра çапăçрăм. Эпĕ тăватă çул хушши Берлина мĕнле çитсе кĕрес-ши тесе ĕмĕтленсе пурăнтăм. Акă халĕ ĕнтĕ манăн ĕмĕт тинех çитрĕ. Тăшмана унăн столицинче вĕлерсе пăрахма мана телей тухнăшăн эпĕ питĕ хĕпĕртетĕп».

Украинăри 1-мĕш фронтра Коровин майор командир пулса тăракан батальонри боецсемпе офицерсен митингĕнче Ригин старшина сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Ку çулта эпир Майăн 1-мĕшне Хĕрлĕ Çар çав тери пысăк çĕнтерӳсем тунă кунсенче уявласа ирттеретпĕр. Çав историллĕ çĕнтерӳсене эпир совет государствин хĕçпăшаллă вăйĕсене Сталин юлташ ертсе пынипе турăмăр. Совет çыннисем пĕлсе тăнă: ăçта Сталин—унта çĕнтерӳ. Верховный Главнокомандующин Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказĕ пире çапăçура çĕнĕ ситĕнӳсем тума хаваслантарать».

Совет Союзĕн Геройĕ Никаноров юлташ çапла каланă: «Эпир Берлинра! Хĕрлĕ Çар воинĕсем ĕнтĕ кунтан, Германи столицинчен, хамăрăн Верховный Главнокомандующине Сталин юлташа хĕрӳллĕ салам яраççĕ. Боецсемпе офицерсем совет тылĕнчи ĕççыннисене саламлаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем, фронта мĕн кирлине пурне те парса тăрса, çав пирĕн паттăр çарсем тунă çĕнтерӳсене пурнăçа кĕртме май туса пачĕç».

Белоруссири 2-мĕш фронтра Поволоцкий полковник политотдел начальникĕ пулса ĕçлекен соединенири чаçăн боецĕсемпе офицерĕсен митингĕнче танк водителĕ механик старши сержант Бережной сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Ман танк нимĕç çĕрĕ тăрăх темиçе çĕр километр малалла кайрĕ, гитлеровецсемпе тăшман техникине сахал мар пĕтерчĕ. Халĕ эпир гитлерла Германие юлашки хут штурмлатпăр. Эпир çав тери курайман тăшмана пуçĕпех вĕлерсе пăрахиччен лăпланас çук. Хамăрăн Верховный Главнокомандующие эпир çапла шантарса калатпăр: совет воинĕн чаплă ятне эпир пур çĕрте те чыслăн та тивĕçлĕн тытăпăр. Эпир хамăр сыхлăха нихăçан та хавшатас çук, пĕр минутлăха та хамăрăн Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕх çинчен манас çук».

Украинăри 3-мĕш фронтра Селиванов подполковникăн чаçĕнчи боецсемпе офицерсен митингĕнче Глухов автоматчик хĕрӳллĕ сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Эпир йывăр вăхăтсем пурăнса ирттертĕмĕр. Эпир урса кайнă нимĕçсен атакисене Дон çинче сире-сире янă, Атăл çинчи парăнми çирĕп хулана Сталинграда сыхласа хăвартăмăр. Нимĕç полкĕсем пирĕн тăван Мускава тата чаплă Ленин хулине хăратса тăнă кунсем те пулчĕç. Анчах та Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе пĕтĕм совет халăхĕ нихăçан та пуçа усман, çирĕплĕхрен хавшаман. Эпир пĕлсе тăнă: пирĕн урама та праçник çитмелле, аслă Сталин пире çĕнтерӳ патне илсе пымалла. Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартрĕ. Совет халăхĕ аслă та телейлĕ кунсем пурăнса ирттерет. Эпир тупа туса çапла калатпăр: Сталин приказне чыслăн та чи кĕске вăхăт хушшинчех пурнăçа кĕртĕпĕр. Эпир фашистла тискер кайăка пуçĕпех çапса аркатăпăр».

Плана срокчен тултарма пулаççĕ

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар Германин тĕп хулине—Берлина илнĕ ятпа, майăн 3-мĕшĕнче Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра митинг пулса иртрĕ. Митинга заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем нумайăн пухăнчĕç. Митинга заводри партбюро секретарĕ М. Брикер юлташ уçрĕ.

Сăмах ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ М. А. Андреев юлташ илчĕ.

— Пирĕн Совет Союзĕнчи тата ирĕклĕхе юратакан çĕршывсенчи халăхсемшĕн савăнăçлă вăхăт çитрĕ,—тет Андреев юлташ.—Паттăр Хĕрлĕ Çар, нимĕç тискер кайăкĕн йăвине—Берлина туртса илсе, ун çине çĕнтерӳ ялавне çĕклерĕ. Эпир халĕ вăрçă пирĕншĕн çĕнтерӳпе вĕçленессин умĕнче тăратпăр. Татăклă çĕнтерӳ вăхăчĕ сывăх ĕнтĕ. Ун пирки Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнче уççăн каларĕ.

Юлашкинчен Андреев юлташ, сулнуçăн Май уявĕнчи приказĕ çине тата пирĕн çарсем Берлина илни çине ответлесе, заводри рабочисене татах та тимлĕнрех ĕçлеме чĕнет.

Унтан орденоносец, слесарь-инструментальщик Е. Дмитренко, пĕр цехăн аслă мастерĕ Ю. Хворост, комсомолецсемпе çамрăксен бригадин бригадирĕ Ф. Мочалова, инженер-конструктор Щетинский, стахановка Семенова юлташсем тухса каларĕç.

Митингра пĕр цехри комсомол организацин секретарĕ Ю. Шаркова юлташ хĕрӳллĕ сăмах каларĕ:

— Фронтри пысăк çĕнтерӳсемпе хавхаланса,—терĕ вăл,—пирĕн рабочисем ырми-канми ĕçлеççĕ. Эпир Сталин юлташăн Май уявĕ ячĕпе панă приказне апрель уйăхĕнчи ĕç планне срокчен тултарнипе кĕтсе илтĕмĕр. Эпĕ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригади иртнĕ уйăхри задание 3 хут ытла иртерсе тултарчĕ.

Хĕрлĕ Çар Берлина илнипе хавасланса, Ю. Шаркова комсорг пулса ĕçлекен цех май уйăхĕнчи плана 29 кун хушшинче тултарма пулчĕ.

Çакăн пек обязательство завод коллективĕ те илчĕ. Митингра йышăннă резолюцире çапла каланă: «Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвĕ çине ответлесе, эпир, Якунин юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, май уйăхĕнчи производство программине срокчен тултарма, II-мĕш квартал планне Чăваш халăхĕн уявĕ тĕлне тултарма пулатпăр», тенĕ.

Г. ОЛЬШАНСКАЯ.
С. ГЕЛЬФАНД.

Хĕрлĕ Çарпа Сталин юлташа тав тăваççĕ

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказа тата пирĕн çарсем Берлин хулине илни çинчен пĕлтернĕ хыпара Шупашкар ĕççыннийĕсем питех те хавасланса кĕтсе илчĕç. Предприятисемпе учрежденисенче çав ятпа савăнăçлă митингсем пулса иртеççĕ.

Чăлха фабрикинче ĕçлекенсем майăн 3-мĕшĕнче пулнă митингĕнче Сталин юлташăн Майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ çинчен тата Хĕрлĕ Çар Берлина илни çинчен фабрикăри парторганизаци секретарĕ М. Асеев юлташ каласа пачĕ. Ун хыççăн чылай рабочисем тухса каларĕç. Стахановка Яшкина çапла каларĕ:

— Берлин парăнчĕ. Ун çинче çĕнтерӳ ялавĕ вĕлкĕшет. Часах пĕтĕм Германи парăнĕ. Вăл çитес сывăх вăхăтрах пулмалла. терĕ пире Сталин юлташ хăйĕн приказĕнче.

Вăрçă вĕçленсе килнипе савăнса, стахановка Яшкина татах та тухăçлăрах ĕçлеме пулчĕ.

Çавăн пек обязательство Гурьева работница та илчĕ.

Фабрика коллективĕ митингра Хĕрлĕ Çара, унăн полководецне Сталин юлташа фронтри çĕнтерӳсемшĕн тав туса резолюци йышăнчĕ.

Республика уйхирĕсенче

Пур колхозсем те акана тухнă

КУСЛАВККА, майăн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те сураки ĕçĕсем пуçланчĕç. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе 1446 гектар сухаланă, 919 гектар акнă. Клевера районри пур колхозсенче те акса пĕтернĕ. Уйрăм колхозсенче акмалли машинăсемпе туллин усă курмаççĕ, машинăпа пурĕ те 175 гектар кăна акнă. «13 годовщина Октября», Партин 16-мĕш съезчĕ тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенче машинăпа пĕр гектар та акман.

МТС-ăн трактор бригадисем çуракинче лайăх ĕçлеççĕ. Анчах та трактортан кăкарса акакан машинăсемпе пачах усă курмаççĕ. «Ударник» колхозра МТС-ăн юсаман тырă акмалли машини ларать. Кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене çӳрессине тата культиваци тăвасси те çителĕксĕр пырать. Тельман ячĕпе тăракан колхозра кĕрхи çĕртме тунă вырăна пĕр гектар та çӳремен. «Спартак» колхозра агротехникăна пăсаççĕ. Колхоз председателĕ Шипов юлташ ăшăк сухалама ирĕк панă. Районри çĕрĕç пайĕн агрономĕ Копылов юлташ 12 сантиметртан кая мар сухаламалли çинчен сухаçăсене ăнлантарса панă вăхăтрах, Шипов 7—8 сантиметр сухалама панă.

Хăшпĕр колхозсенче, сăмахран, «Путь Ленина» колхозра, сухаланă хыççăнах çӳремеççĕ, тăпрана типĕтсе яраççĕ.

Районĕпе çураки вăхăтĕнче 700 ĕç вĕрентнĕ вăкăрпа вăрлăх турттарас тата ака-суха ĕçĕнче усă курма пăхнă. Анчах та паянхи кун тĕлне пурĕ те 91 вăкăрпа кăна ĕçлеççĕ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

* * *

КӲКЕÇ, майăн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Шуркка ял Советĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунистка Е. Петрова) майăн 1-мĕшне 50 гектар сухаланă, 30 гектар сĕлĕпе вика акнă, 66 гектар кĕрхи калчасене апат панă. Уйхирте ĕçлекенсем валли столовăй уçнă.

Суха тунă çĕрте ватă колхозниксем Илларионовна Никитин тата Сидоровна Иванов комсомолецсем хăйсен нормисене 120—150-шар процент тултарса пыраççĕ.

Ĕç тухăçлăхĕпе ĕçĕн пахалăхĕ çинчен уйрăмăнах иккĕмĕш бригада (бригадирĕ Илларионова) малта пырать.

Районри ытти колхозсенче те çураки ăнăçлăн пырать. Паянхи куна пурĕ 1082 гектар сухаланă, 416 гектар клевер, 448 гектар тĕштырăсем акнă. 490 центнер тырă, 3.450 центнер çĕрулми вăрлăхĕсене яровизациленĕ. 498 гектар кĕрхи калчасене çӳреленĕ, 402 гектар кĕрхи калчасене апат панă.

Анчах та колхозсем машинăсемпе çителĕклĕн усă курмаççĕ. Сăмахран, Сĕньял ял Советĕнчи «Шефнаркомзема» колхозра юсавлă 2 акмалли машина пур, анчах вĕсемпе усă курмаççĕ, алăпа çеç акаççĕ. Кун пек колхозсем татах та пур. Çавăнпа та ĕнтĕ районĕпе 85 гектар çеç машинăпа акнă.

Г. ПЕТРОВ.

В. М. Молотов юлташ Мэррея тата Ломбардо Толеданона йышăнни

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян В. М. Молотов юлташ США-ри производствăллă профсоюзсен конгресĕн председательне Мэррея йышăннă. Çавăн пекех тата Латинлă Америкăри ĕççыннисен конфедерацийĕн пуçлăхне Ломбардо Толеданона хăйне уйрăм йышăннă.

КРАКОВРИ ТĔП УРАМА СТАЛИН МАРШАЛĂН ЯТНЕ ПАНĂ

ВАРШАВА, майăн 2-мĕшĕ (ТАСС). Краковри халăх совечĕ Краковри тĕп урамсенчен пĕрне Сталин Маршал ятне пама йышăннă.

Пĕрлешнĕ нацисен Сан-Францискăри конференцийĕ

САККĂРМĔШ ПĔРЛЕХИ ЛАРУ

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Сан-Францискăри конференцин 8-мĕш ларăвĕ Лăпкă океан вăхăчĕпе майăн 2-мĕшĕнче 15 сехет те 30 минутра (Мускав вăхăчĕпе—майăн 3-мĕшĕнче 1 сехет те 30 минутра) уçăлнă. Ăна В. М. Молотов юлташ председатель пулса ертсе пынă. Ларура конференцие чĕнсе каластăн пулнă делегацисен председателĕсем сăмах тухса каланă.

В. М. Молотов юлташ ларăва ертсе пыма трибуна патне пырса тăрсан, конференцири çынсем ăна алă çупса йышăннă. В. М. Молотов юлташ конференцин генеральнăй секретарьне Хисса сăмах панă. Хисс конференцири 4 комиссин представителĕсен паянхи канашлăвĕ çинчен отчет туса панă.

Хисс çапла каланă: конференцие хăйсен шухăшĕсене каласа парасшăн пулнă тĕрлĕ делегацисен представителĕсем пурте сăмах тухса каларĕç. Халĕ ĕнтĕ конференцин 4 комиссийĕ тата 12 подкомиссийĕ ĕçе тытăнма пултараççĕ. Комиссисен представителĕсен паян ирхине пулса иртнĕ канашлăвĕ кашни комисси членĕсене, ыран подкомиссисен членĕсемпе пĕрле пухăнса, плансем тума тата ĕçе тытăнма сĕнчĕ, тенĕ. Лару Хисс отчетне ырланă. Унтан çаксем тухса каланă:

Мексикăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Падилья, Норвегин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ли, Никарагуан ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Аргуэльс Варгас, Панамăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Химнес, Перун ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Галаххер, Сири делегацийĕн пуçлăхĕ—премьер-министр Фарис Эль Хури, Югослави делегацийĕн пуçлăхĕ—ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Шубашич.

Шубашич хăйĕн сăмахне каласа пĕтернĕ хыççăн председатель В. М. Молотов юлташ çапла каланă: 8-мĕш ларура тухса каласшăн пулнă делегаци пуçлăхĕсем пурте тухса каларĕç, тенĕ. Вара 18 сехет те 15 минутра (Мускав вăхăчĕпе—майăн 3-мĕшĕнче 4 сехет те 15 минутра) лару хупăннă.

ÇУРÇĔР ИТАЛИРЕ ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМ ПАРĂННĂ

ЛОНДОН, майăн 2-мĕшĕ (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавращĕнчи çарĕсен штабĕ Çурçĕр Италире Германи çарĕсем парăнни çинчен пĕлтернĕ. Парăнасси çинчен тунă килĕшӳ çине апрелĕн 29-мĕшĕнче алă пуснă, вăл килĕшӳ вара майăн 2-мĕшĕнче кăнтăрла вăя кĕнĕ. Кун пирки Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ Трумэн Александер фельдмаршалпа Кларк генерала салам янă.

Лондонри радион тепĕр пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: премьер-министр Черчилль паян общинăсен палатинче Италире Германи çарĕсем парăнни çинчен пĕлтернĕ. Вăл каланă тăрăх, ку «малашнехи операцисемшĕн питĕ усăллă пулма пултарать». Черчилль союзниксен Италири çарĕсене саламланă.

МУССОЛИНИПЕ УНĂН ШАЙККИН ÇАРАТСА ПУХНĂ ЫЛТĂННЕ ТЫТСА ИЛНĔ

РИМ, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Лаворо» хаçат çапла пĕлтерет: Муссолинипе унăн шайккине арестленĕ чухне вĕсенчен 50 миллион лирлăх ылттăн тытса илнĕ.

ФОН РУНДШТЕТТ ФЕЛЬДМАРШАЛА ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин 7-мĕш армипе пĕрле çӳрекен корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Мюнхенран 25 миля кăнтăртарахри госпитальре Германин хĕвеланăç фронтĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ пулнă фон Рундштетт фельдмаршала тупнă.

ПАРИЖРИ РАДИО ВОССТАНИ ТУНĂ БАВАРЕЦСЕМ ЛАВАЛЬПЕ ДЕАНА ЯРСА ТЫТНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

ПАРИЖ, апрелĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине Парижри радио çапла пĕлтернĕ: Лаваль, Марсель Деа тата ытти темиçе сутăнчăк, Франци нимĕçсем оккупацилесе тăнă вăхăтра хăйсене тата хăйсен халăхне нимĕçсене сутнăскерсем, халь восстани тунă баварецсен аллине лекнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АНГЛИ ÇАРĔСЕМ РАНГУН ХУЛИНЕ ПЫРСА КĔНĔ

ЛОНДОН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнă пĕлтернĕ тăрăх, Англи çарĕсем Бирма столицине Рангун хулине пырса кĕнĕ. Вăл хулана пырса кĕриччен малтан столицăран 40 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Рангун шывĕн икĕ хĕррине те сывлăшран тата карапсем çинчен десант антарнă.

Австрали çарĕсем, Америкăпа Австралин флочĕпе авиацийĕ пулăшнипе, Борнео утравĕн çурçĕр-хĕвелтухăç çырапĕ патĕнчи Таракан утравĕ çине аннă.

ВАШИНГТОН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтерет: майăн 3-мĕшĕнче Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран хăватлă бомбардировщикĕсем, Мариан утравĕсем çинчен вĕçсе хăпарса, Япони Кюсю утравне тапăннă.

ПАРИЖРИ МУНИЦИПАЛИТЕТА СУЙЛАНИН РЕЗУЛЬТАЧĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Парижран муниципалитета суйланин çак результатне пĕлтерет: суйлавра коммунистсем — 27, социалистсем —27, христианла демократсем—14, радикал-социалистсем—10 вырăн илнĕ.

—⊙—

Эррио господин Мускава килнĕ

Франци республикин премьер-министрĕ тата депутатсен палатин председателĕ пулнă Эдуард Эррио господин, Хĕрлĕ Çар Германин концентрациллĕ лагерĕнчен ирĕке кăларнăскер, Францие кайнă чухне апрелĕн 30-мĕшĕнче Мускава самолетпа вĕçсе çитнĕ. Ăна концентрациллĕ лагере Францие нимĕçсем оккупациленĕ вăхăтра хупнă пулнă. (ТАСС).

Большевикла пичет кунĕ

1912 çулхи майăн 5-мĕшĕнче большевизм никĕсне хывакан аслă çынсем—Ленинпа Сталин «Правда» хаçатăн пĕрремĕш номерне кăларнă. Çавăнтанпа пирĕн çĕршыври ĕççыннисем çулсеренех майăн 5-мĕшĕнче большевикла пичет кунне уявлаççĕ.

Тăваттăмĕш хут ĕнтĕ совет халăхĕ пичет кунне Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче уявлать.

Пирĕн парти, Ленин—Сталин партийĕ пичете яланах питĕ пысăк вырăна хурса хакланă. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче, совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе мĕнпур вăйне пухнă вăхăтра, большевикла сăмахăн витĕмлĕхĕ татах та ытларах ӳсрĕ.

Совет патриочĕ ăçта пулсан та, —вăл хĕçпăшал тунă çĕрте ĕçлет-и, чи малти позицире çапăçать-и,—вăл яланах большевикла пичет сăмахне, сталинла чăнлăх сăмахне илтет. Çав сăмах ăна Тăван çĕршыва юратма, тăшмана курайми пулма вĕрентет, ку сăмах унăн вăй-халне ӳстерет, Ленин—Сталин ĕçĕ çĕнтерессине ĕнентерет. Совет ĕççыннисем совет пичетне ĕненеççĕ, мĕншĕн тесен вăл ĕççыннисен чăн-чăн интересĕсемшĕн кĕрешет, халăхăн чăн-чăн шухăшĕсене каласа парать. Большевикла пичет вăл—коллективлă агитатор, пропагандист тата организатор пулса тăрать.

Хальхи вăхăтри кунсенче пирĕн хаçатсем халăх хăйĕн паттăр Хĕрлĕ Çарне юратни çинчен, совет çĕршывĕнчи халăхсем пĕр-пĕринпе туслă пурăнни çинчен, ССР Союзĕнчи рабочи класăн, колхоз хресченĕсен тата совет интеллигенцийĕн пĕр-пĕрин хушшинчи аслă юлташлăхĕ çинчен, тăшмана тĕппипех аркатса тăкассишĕн вĕсем хăйсен вăй-хăватне шеллемесĕр ĕçлеме хатĕрри çинчен каласа параççĕ. Пирĕн хаçатсенче Хĕрлĕ Çарăн тĕнчене тĕлĕнтерекен мухтавлă ĕçĕсем çинчен, пирĕн воинсен паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ çинчен, пирĕн офицерсемпе генералсем сталинла çар наукине мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен каласа параççĕ.

Хĕрлĕ Çарта тухакан хаçатсем пирĕн командирсене çапăçури лайăх опытсене боецсем хушшинче сарма, вăрçăн тĕрлĕ формисене, çĕнĕрен шухăшласа кăларнă хĕçпăшалсене вĕренсе пыма, паттăрлăхпа хăюлăха хăнăхтарма, советлă Тăван çĕршыва юратмашкăн тата тăшмана курайми пулмашкăн вĕрентме питĕ пысăк пулăшу панă, халĕ те параççĕ.

Сталин юлташ кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчи приказра вăрçă юлашки тапхăра кĕнине, «гитлерла Германин шутлă кунсем юлнине» палăртрĕ. Совет Союзĕнчи ĕççыннисене «тимлĕн те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме, фронта пур енчен те пулăшассине вăйлатса пыма, çĕршыва вăрçă кунĕ сурансенчен хăвăртрах тӳрлетме, хамăрăн Совет государствин хăватне татах та çӳлерех çĕклеме» чĕнсе каласа, пирĕн умма çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ.

Большевикла пичет умĕнче халĕ—производствăна хăвăртрах аталантарас, вăрçă пирки пулнă сурансене хăвăртрах тӳрлетес, ĕçтухăçлăхне татах ӳстерес, производствăри мĕнпур машинăсемпе, станоксемпе туллинрех усă курас, чĕрта-варпа материалсене, электроэнергие перекетлес, таварăн хăйне ларакан хакне йӳнетес, продукци пахалăхне ӳстерес, фронтпа тыл мĕн ыйтнисене туса памашкăн çĕнĕрен те çĕнĕ ресурссем тупас тесе тăрăшас задача тăрать.

Большевикла пичет умĕнче халĕ — колхозсен мĕнпур вăй-хăватне тырпул тухăçне ӳстерме, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартма, тракторсемпе тата ялхуçалăх машинисемпе туллинрех усă курма, колхозри ĕçе йĕркеллĕ организацилеме, ялхуçалăх артелĕн сталинла уставне çирĕп пурнăçа кĕртсе пыма мобилизацилес задача тăрать.

Большевикла пичет умĕнче халĕ—массăсене политикăллă воспитани парас, пирĕн совет çыннисене идеологи тĕлĕшĕнчен çирĕп пулма вĕрентес, Ленин — Сталин партийĕн идейине ĕççыннисем хушшинче сарса пырас задача тăрать.

Çакăнпа пĕрлех пирĕн хаçатсенче партипе комсомол пурнăçне анлăнрах çутатса памалла, марксизм-ленинизм теорийĕн тасалăхĕшĕн кĕрешмелле, идеологи тĕлĕшĕнчен пулакан тĕрлĕ йăнăшсене критиклемелле, революциллĕ сыхăлăха вăйлатса пымалла.

Партин вырăнти органĕсен пирĕн пичете кашни кун пулăшу парса, ертсе пымалла. Вырăнти хаçатсем тавра актив мĕн чухлĕ йышлăрах, вĕсем массăсем хушшинче туса пыракан политикăллă ĕç те çавăн чухлĕ анлăрах пулать. Хаçатăн активĕ мĕн чухлĕ йышлăрах, вăл ыйтусене çавăн чухлĕ тарăнрах çутатса пырать, массăсемпе вăл çавăн чухлĕ çирĕпрех çыхăну тытать.

Большевикла пичет сассийĕ хăватлă та вăйлăн янăрамалла. Хальхи вăхăтри тĕп задача—Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕ тĕлне кăларнă историллĕ приказа пурнăçа кĕртме халăхăн мĕнпур вăйне мобилизацилесси пулса тăрать.

Большевиксен партийĕпе Совет правительствин чĕнĕвĕсене массăсем патне çитерес, гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳре совет çыннисене хамăрăн аслă Тăван çĕршывăн мухтавĕшĕн çĕнĕрен те çĕнĕ паттăр ĕçсем тума хавхалантарас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесси — пирĕн пичетĕн кулленхи задачи.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00589

Типография № 1 Управл. полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000